ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНĔ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МУНИЦИПАЛЛĂ ПĔРЛĔХĔСЕН ЧИККИСЕНЕ ПАЛĂРТАССИ ТАТА ВĔСЕНЕ МУНИЦИПАЛЛĂ ОКРУГĂН ТАТА ХУЛА ОКРУГĔН СТАТУСНЕ ПАРАССИ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КĔРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2024 çулхи юпа уйăхĕн 24-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин муниципаллă пĕрлĕхĕсен чиккисене палăртасси тата вĕсене муниципаллă округăн тата хула округĕн статусне парасси çинчен" 2004 çулхи чӳк уйăхĕн 24-мĕшĕнчи 37 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2004, 61 №; 2007, 73, 75 №-сем; 2009, 82 №; 2011, 89, 92 (I том) №-сем; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2015, 10 №; 2016, 4, 6 №-сем; "Республика" хаçат, 2017, чӳк уйăхĕн 22-мĕшĕ; 2021, нарăс уйăхĕн 25-мĕшĕ, çу уйăхĕн 19-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 2-мĕшĕ; 2022, ака уйăхĕн 6-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 5-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 22-мĕшĕ; "право21.рф" сеть кăларăмĕ, 2022, раштав уйăхĕн 2-мĕшĕ, 0000000000000328, 000000000000329 №-сем, раштав уйăхĕн 21-мĕшĕ, 0000000000000439 №; "Республика" хаçат, 2024, çу уйăхĕн 30-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 2^{24} статьяна çакăн пек çырса хурас:

"**2^{24} статья**

Администраци центрĕ Çĕмĕрле хулинче вырнаçнă Чăваш Республикин Çĕмĕрле муниципаллă округне муниципаллă округ статусне парас

(52^{24}-мĕш хушса çырни) тата Чăваш Республикин Çĕмĕрле муниципаллă округĕн чиккисене çак Саккун çумне хушса çырнисемпе килĕшӳллĕн палăртас (52^{24-1}-мĕш, 52^{24-2}-мĕш хушса çырнисем).";

2) 52^{2-1}-мĕш, 52^{2-2}-мĕш хушса çырнисем хăйсен вăйне çухатнă тесе йышăнас;

3) çакăн пек çырса 52^{24-1}-мĕш хушса çырни хушса хурас:

"Чăваш Республикин
"Чăваш Республикин муниципаллă
пĕрлĕхĕсен чиккисене палăртасси тата
вĕсене муниципаллă округăн тата хула округĕн
статусне парасси çинчен" саккунĕ çумне
52^{24-1}-мĕш хушса çырни

Чăваш Республикин Çĕмĕрле муниципаллă округĕн схема картти



Чикĕсене ăнлантарса пани:

1-мĕш точкăран пуçласа 156-мĕш точкăччен – Чăваш Республикин Хĕрлĕ Чутай муниципаллă округĕн çĕрĕсем

156-мĕш точкăран пуçласа 281-мĕш точкăччен – Чăваш Республикин Элĕк муниципаллă округĕн çĕрĕсем

281-мĕш точкăран пуçласа 482-мĕш точкăччен – Чăваш Республикин Вăрнар муниципаллă округĕн çĕрĕсем

482-мĕш точкăран пуçласа 492-мĕш точкăччен – Чăваш Республикин Йĕпреç муниципаллă округĕн çĕрĕсем

492-мĕш точкăран пуçласа 604-мĕш точкăччен – Чăваш Республикин Пăрачкав муниципаллă округĕн çĕрĕсем

604-мĕш точкăран пуçласа 741-мĕш точкăччен – Чулхула облаçĕн çĕрĕсем

741-мĕш точкăран пуçласа 1-мĕш точкăччен – Чăваш Республикин Хĕрлĕ Чутай муниципаллă округĕн çĕрĕсем";

4) çакăн пек çырса 52^{24-2}-мĕш хушса çырни хушса хурас:

"Чăваш Республикин
"Чăваш Республикин муниципаллă
пĕрлĕхĕсен чиккисене палăртасси тата
вĕсене муниципаллă округăн тата хула округĕн
статусне парасси çинчен" саккунĕ çумне
52^{24-2}-мĕш хушса çырни

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ÇĔМĔРЛЕ МУНИЦИПАЛЛĂ ОКРУГĔН ЧИККИСЕН ТЕКСТ СĂНЛАВĔ

Чăваш Республикин Çĕмĕрле муниципаллă округĕн территорийĕн чикки Çĕмĕрле лесничествин Саланчăкри участок лесничествин 1-мĕш вăрман кварталĕн çурçĕр-хĕвел анăç кĕтесĕ тата Чăваш Республикин Хĕрлĕ Чутай муниципаллă округĕн çĕрĕсемпе чикĕленекен точка шутланакан N55°40'29", E46°18'45" географи координачĕсемлĕ 1-мĕш точкăран пуçланать.

Малалла чикĕ хĕвел тухăçнелле Çĕмĕрле лесничествин Саланчăкри участок лесничествин 1–4-мĕш вăрман кварталĕсен çурçĕр чиккисемпе кайса, Етĕрне лесничествин Майскинчи участок лесничествин 15–18-мĕш вăрман кварталĕсен кăнтăр чиккисемпе тата 25-мĕш вăрман кварталĕн хĕвел анăç чиккипе чикĕленекен ял хуçалăх çĕрĕсен çурçĕр чиккипе 5689 м пырса Етĕрне лесничествин Майскинчи участок лесничествин 25-мĕш вăрман кварталĕн кăнтăр-хĕвел анăç кĕтесĕ шутланакан точка таран (21 т., N55°39'57", E46°23'28");

кăнтăралла Етĕрне лесничествин Майскинчи участок лесничествин 25-мĕш, 31-мĕш, 39-мĕш вăрман кварталĕсен хĕвел анăç чиккисемпе

чикĕленекен ял хуçалăх çĕрĕсен хĕвел тухăç чиккипе 4493 м кайса Çĕмĕрле лесничествин Саланчăкри участок лесничествин 14-мĕш вăрман кварталĕн çурçĕр-хĕвел анăç кĕтесĕ шутланакан точка таран (102 т., N55°38'23", E46°22'54");

хĕвел тухăçнелле Çĕмĕрле лесничествин Саланчăкри участок лесничествин 14–21-мĕш вăрман кварталĕсен, вĕсем Чăваш Республикин Хĕрлĕ Чутай муниципаллă округĕн ял хуçалăх çĕрĕсен кăнтăр чиккисемпе тата Етĕрне лесничествин Майскинчи участок лесничествин 43–47-мĕш вăрман кварталĕсен кăнтăр чиккисемпе чикĕленеççĕ, çурçĕр чиккисемпе 8862 м кайса Çĕмĕрле лесничествин Саланчăкри участок лесничествин 21-мĕш вăрман кварталĕн çурçĕр-хĕвел тухăç кĕтесĕ шутланакан точка таран (152 т., N55°38'26", E46°30'56");

çурçĕрелле Етĕрне лесничествин Майскинчи участок лесничествин 47-мĕш вăрман кварталĕн хĕвел тухăç чиккипе 559 м кайса Чăваш Республикин Хĕрлĕ Чутай тата Элĕк муниципаллă округĕсен çĕрĕсем чикĕленекен точка шутланакан точка таран (156 т., N55°38'44", E46°30'57") иртет.

Малалла чикĕ хĕвел тухăçнелле ял хуçалăх çĕрĕсемпе 2945 м кайса 172-мĕш точка таран (N55°38'40", E46°33'43");

çурçĕр-хĕвел тухăçнелле ял хуçалăх çĕрĕсемпе 5886 м кайса Чăваш Республикин Элĕк муниципаллă округĕн Илленушкăнь ялĕн хĕвел анăç чиккинчен 760 м кăнтăр-хĕвел анăçнелле вырнаçнă точка таран (Красноармейски урам пуçламăшĕ) (209 т., N55°39'46", E46°38'45");

хĕвел тухăçнелле ял хуçалăх çĕрĕсен çурçĕр чиккипе, Çĕмĕрле лесничествин Турханти участок лесничествин 90-мĕш вăрман кварталĕн талккăш вăрманĕн çурçĕр чиккисемпе 2957 м кайса çырма тĕпĕнче вырнаçнă точка таран (222 т., N55°39'35", E46°41'30");

çурçĕр-хĕвел тухăçнелле çырма тĕпĕпе тата Хирлеп юхан шывăн сылтăм юппи шутланакан ятсăр пĕчĕк юхан шыв çулĕпе 1954 м кайса çырман сылтăм юппи таран (275 т., N55°40'8", E46°42'51");

кăнтăр-хĕвел тухăçнелле çырма юппипе тата ял хуçалăх çĕрĕсен çурçĕр-хĕвел тухăç чиккипе 986 м кайса Чăваш Республикин Вăрнар тата Элĕк муниципаллă округĕсен çĕрĕсем чикĕленекен точка шутланакан точка таран (281 т., N55°39'46", E46°43'29") иртет.

Малалла чикĕ кăнтăр-хĕвел анăçнелле ял хуçалăх çĕрĕсемпе 1129 м кайса Уравăш юхан шывăн пĕви çумне сулахай енчен сыпăнакан çырма тӳпинче вырнаçнă точка таран (283 т., N55°39'19", E46°42'46");

кăнтăралла лартнă вăрман тăрăх кайса, Уравăш юхан шыв урлă каçса, ятсăр çырма тĕпĕ тăрăх пырса, Тарăнçырма ялĕ тавра çурçĕр чикĕпе 2608 м иртсе Тарăнçырма ялĕн çурçĕр вĕçĕнчен 412 м кăнтăр-хĕвел тухăçнелле вырнаçнă точка таран (Винокуров урамĕн вĕçĕ) (336 т., N55°38'13", E46°43'38");

кăнтăралла ял хуçалăх çĕрĕсемпе Юманай салин хĕвел тухăç чикки тăрăх Шупашкар – Сăр автомобиль çулĕ (Ульяновск облаçĕн чикки таран) урлă 2532 м кайса Юманай салин хĕвел тухăç чиккинчен 646 м кăнтăралла вырнаçнă точка таран (Гагарин урамĕн вĕçĕ) (360 т., N55°36'56", E46°43'13");

хĕвел тухăçнелле ятсăр çырма-çатран сылтăм енĕ тăрăх 701 м кайса Чăваш Республикин Вăрнар муниципаллă округĕн Açăмçырми ялĕн хĕвел анăç вĕçĕнчен 510 м кăнтăр-хĕвел анăçнелле вырнаçнă точка таран (Октябрьски урам пуçламăшĕ) (362 т., N55°36'51", E46°43'52");

кăнтăр-хĕвел анăçнелле ял хуçалăх çĕрĕсемпе 4499 м кайса Янташ ялĕн кăнтăр вĕçĕнчен 682 м хĕвел тухăçнелле вырнаçнă точка таран (Николаев урамĕн вĕçĕ) (399 т., N55°34'58", E46°41'40");

кăнтăралла Мăн Çавал юхан шыв урлă каçса, Çĕмĕрле лесничествин Турханти участок лесничествин 2-мĕш, 4-мĕш, 21-мĕш, 38-мĕш, 52-мĕш, 65-мĕш, 78-мĕш, 89-мĕш вăрман кварталĕсен, вĕсем Вăрнар лесничествин Калининăри участок лесничествин 14-мĕш, 27-мĕш, 36-мĕш, 50-мĕш, 73-мĕш, 83-мĕш, 95-мĕш, 101-мĕш, 104-мĕш вăрман кварталĕсен хĕвел анăç чиккисемпе чикĕленеççĕ, хĕвел тухăç чиккисемпе 10387 м пырса Çĕмĕрле лесничествин Турханти участок лесничествин 89-мĕш вăрман кварталĕн кăнтăр-хĕвел тухăç кĕтесĕ таран (434 т., N55°29'29", E46°42'14");

кăнтăр-хĕвел анăçнелле Çĕмĕрле лесничествин Çĕмĕрлери участок лесничествин 114-мĕш, 124-мĕш, 133-мĕш, 142-мĕш, 152-мĕш, 159-мĕш вăрман кварталĕсен, вĕсем Вăрнар лесничествин Калининăри участок лесничествин 105-мĕш, 106-мĕш, 109-мĕш вăрман кварталĕсен хĕвел анăç чиккисемпе, 115-мĕш, 114-мĕш вăрман кварталĕсен çурçĕр чиккисемпе, Вăрнар лесничествин Вăрнарти участок лесничествин 94-мĕш, 100-мĕш вăрман кварталĕсен хĕвел анăç чиккисемпе чикĕленеççĕ, хĕвел тухăç чиккисемпе 6965 м кайса Çĕмĕрле лесничествин Çĕмĕрлери участок лесничествин 159-мĕш вăрман кварталĕн кăнтăр-хĕвел тухăç кĕтесĕ таран (448 т., N55°26'49", E46°38'19");

хĕвел тухăçнелле Вăрнар лесничествин Вăрнарти участок лесничествин 100-мĕш, 101-мĕш вăрман кварталĕсен кăнтăр чиккисемпе чикĕленекен ял хуçалăх çĕрĕсемпе 2177 м кайса Вăрнар лесничествин Вăрнарти участок лесничествин 102-мĕш вăрман кварталĕн кăнтăр-хĕвел анăç кĕтесĕ таран (451 т., N55°26'53", E46°40'22");

кăнтăралла Вăрнар лесничествин Вăрнарти участок лесничествин 109-мĕш, 113-мĕш, 120-мĕш, 130-мĕш, 133-мĕш вăрман кварталĕсен хĕвел анăç чиккисемпе чикĕленекен ял хуçалăх çĕрĕсемпе 5353 м кайса Вăрнар лесничествин Вăрнарти участок лесничествин 133-мĕш вăрман кварталĕн кăнтăр-хĕвел анăç кĕтесĕ таран (467 т., N55°24'1", E46°40'37");

кăнтăралла ял хуçалăх çĕрĕсемпе, Çĕмĕрле лесничествин Мăн Улхашри участок лесничествин 3-мĕш, 10-мĕш, 21-мĕш вăрман кварталĕсен, вĕсем Вăрнар лесничествин Вăрнарти участок лесничествин 153-мĕш, 157-мĕш, 161-мĕш, 162-мĕш, 167-мĕш, 168-мĕш вăрман кварталĕсен хĕвел анăç чиккисемпе чикĕленеççĕ, хĕвел тухăç чиккисемпе 7369 м кайса Чăваш Республикин Вăрнар тата Йĕпреç муниципаллă округĕсен çĕрĕсем чикĕленекен точка шутланакан точка таран (482 т., N55°21'13", E46°42'37") иртет.

Малалла чикĕ кăнтăралла Çĕмĕрле лесничествин Мăн Улхашри участок лесничествин 21-мĕш, 32-мĕш, 43-мĕш, 54-мĕш, 57-мĕш, 83-мĕш вăрман кварталĕсен хĕвел тухăç чиккисемпе тата Йĕпреç лесничествин Кушлавăшри участок лесничествин 56-мĕш, 85-мĕш, 113-мĕш, 136-мĕш, 156-мĕш вăрман кварталĕсен хĕвел анăç чиккисемпе 6224 м кайса Чăваш Республикин Йĕпреç тата Пăрачкав муниципаллă округĕсен çĕрĕсем чикĕленекен точка шутланакан точка таран (492 т., N55°17'58", E46°43'7");

кăнтăр-хĕвел анăçнелле Çĕмĕрле лесничествин Мăн Улхашри участок лесничествин 83-мĕш, 89-мĕш, 94-мĕш вăрман кварталĕсен кăнтăр чиккисемпе тата 93-мĕш вăрман кварталĕн хĕвел тухăç чиккипе 5644 м кайса, асăннă вăрман кварталĕсем Йĕпреç лесничествин Березовкăри участок лесничествин 1-мĕш вăрман кварталĕн çурçĕр тата хĕвел анăç чиккисемпе, 6-мĕш, 5-мĕш вăрман кварталĕсен çурçĕр чиккисемпе тата 15-мĕш вăрман кварталĕн хĕвел анăç чиккипе чикĕленеççĕ, Çĕмĕрле лесничествин Мăн Улхашри участок лесничествин 93-мĕш вăрман кварталĕн кăнтăр-хĕвел тухăç кĕтесĕ таран (504 т., N55°16'11", E46°40'46");

хĕвел анăçнелле Çĕмĕрле лесничествин Мăн Улхашри участок лесничествин 93-мĕш, 92-мĕш, 91-мĕш, 90-мĕш вăрман кварталĕсен, вĕсем Çĕ-

мĕрле лесничествин Пăрачкаври участок лесничествин 20с-мĕш, 19с-мĕш, 38с-мĕш, 37с-мĕш вăрман кварталĕсен çурçĕр чиккисемпе чикĕленеççĕ, кăнтăр чиккисемпе 3123 м кайса Çĕмĕрле лесничествин Мăн Улхашри участок лесничествин 90-мĕш вăрман кварталĕн кăнтăр-хĕвел тухăç кĕтесĕ таран (524 т., N55°15'46", E46°38'6");

çурçĕр-хĕвел анăçнелле Çĕмĕрле лесничествин Мăн Улхашри участок лесничествин 90-мĕш, 84-мĕш вăрман кварталĕсен, вĕсем Çĕмĕрле лесничествин Пăрачкаври участок лесничествин 18с-мĕш, 17с-мĕш вăрман кварталĕсен çурçĕр-хĕвел тухăç чиккисемпе чикĕленеççĕ, кăнтăр-хĕвел анăç чиккисемпе 2836 м кайса Çĕмĕрле лесничествин Мăн Улхашри участок лесничествин 84-мĕш вăрман кварталĕн хĕвел анăç кĕтесĕ таран (526 т., N55°16'36", E46°35'52");

хĕвел анăçнелле Çĕмĕрле лесничествин Мăн Улхашри участок лесничествин 75-мĕш, 74-мĕш, 73-мĕш, 72-мĕш, 71-мĕш, 70-мĕш, 186-мĕш, 185-мĕш, 184-мĕш, 183-мĕш, 182-мĕш вăрман кварталĕсен кăнтăр чиккисемпе кайса, Шупашкар – Сăр автомобиль çулĕ урлă каçса (Ульяновск облаçĕн чикки таран), Çĕмĕрле лесничествин Мăн Улхашри участок лесничествин 182-мĕш, 181-мĕш вăрман кварталĕсен, вĕсем Çĕмĕрле лесничествин Пăрачкаври участок лесничествин 16с-мĕш, 15с-мĕш, 14с-мĕш, 13с-мĕш, 12с-мĕш, 11с-мĕш, 10с-мĕш, 9с-мĕш, 8с-мĕш, 2с-мĕш, 1с-мĕш вăрман кварталĕсен çурçĕр чиккисемпе чикĕленеççĕ, кăнтăр чиккисемпе 13546 м иртсе Çĕмĕрле лесничествин Мăн Улхашри участок лесничествин 181-мĕш вăрман кварталĕн кăнтăр-хĕвел анăç кĕтесĕ таран (557 т., N55°16'35", E46°24'3");

çурçĕр-хĕвел анăçнелле Çĕмĕрле лесничествин Мăн Улхашри участок лесничествин 181-мĕш вăрман кварталĕн хĕвел анăç чиккипе "Шупашкарти В.И. Чапаев ячĕллĕ производство пĕрлешĕвĕ" акционерсен обществин полигонĕн кăнтăр чикки тăрăх иртсе, Çĕмĕрле лесничествин Мăн Улхашри участок лесничествин 176-мĕш, 175-мĕш, 174-мĕш, 173-мĕш, 172-мĕш, 171-мĕш, 170-мĕш вăрман кварталĕсен кăнтăр-хĕвел анăç чиккисемпе, Çĕмĕрле лесничествин Пăрачкаври участок лесничествин 8н-мĕш, 4н-мĕш вăрман кварталĕсен кăнтăр-хĕвел анăç чиккисемпе, ял хуçалăх çĕрĕсемпе, Çĕмĕрле лесничествин Пăрачкаври участок лесничествин 30н-мĕш, 29н-мĕш, 28н-мĕш вăрман кварталĕсен çурçĕр чиккисемпе тата 27н-мĕш вăрман кварталăн хĕвел тухăç чиккипе, 19н-мĕш, 14н-мĕш, 7н-мĕш вăрман кварталĕсен çурçĕр-хĕвел тухăç чиккисемпе чикĕленекен

Çĕмĕрле лесничествин Мăн Улхашри участок лесничествин 122-мĕш, 120-мĕш вăрман кварталĕсен кăнтăр-хĕвел анăç чиккисемпе, унтан ял хуçалăх çĕрĕсемпе 20422 м иртсе Чăваш Республикин Пăрачкав муниципаллă округĕн тата Чулхула облаçĕн çĕрĕсем чикĕленекен точка шутланакан точка таран (604 т., N55°22'46", E46°13'59") иртет.

Малалла чикĕ çурçĕрелле Сăр юхан шывĕн фарватерĕпе 38732 м кайса Сăр юхан шывне унăн кивĕ шыв çулĕ сылтăм енчен юхса кĕрекен вырăн шутланакан точка таран (715 т., N55°31'9", E46°12'29");

çурçĕрелле Сăр юхан шывĕн кивĕ шыв çулĕпе 3990 м кайса Чăваш Республикин Хĕрлĕ Чутай муниципаллă округĕн тата Чулхула облаçĕн çĕрĕсем чикĕленекен точка шутланакан точка таран (741 т., N55°32'32", E46°12'48");

çурçĕрелле Çĕмĕрле лесничествин Çĕмĕрлери участок лесничествин 74-мĕш, 56-мĕш вăрман кварталĕсен, вĕсем Етĕрне лесничествин Атнарти участок лесничествин 89-мĕш, 88-мĕш вăрман кварталĕн хĕвел тухăç чиккисемпе чикĕленеççĕ, хĕвел анăç чиккисемпе ял хуçалăх çĕрĕсемпе иртсе Горький чукун çул çумĕнчи вырăн урлă каçса 2965 м кайса Çĕмĕрле лесничествин Çĕмĕрлери участок лесничествин 56-мĕш вăрман кварталĕн çурçĕр-хĕвел анăç кĕтесĕ таран (751 т., N55°34'6", E46°12'35");

çурçĕр-хĕвел тухăçнелле Çĕмĕрле лесничествин Çĕмĕрлери участок лесничествин 56-мĕш, 47-мĕш, 2-мĕш, 1-мĕш вăрман кварталĕсен, вĕсем Етĕрне лесничествин Атнарти участок лесничествин 78-мĕш, 79-мĕш, 75-мĕш, 76-мĕш, 77-мĕш вăрман кварталĕсен кăнтăр чиккисемпе чикĕленеççĕ, çурçĕр чиккисемпе 4201 м кайса Етĕрне лесничествин Атнарти участок лесничествин 77-мĕш вăрман кварталĕн кăнтăр-хĕвел тухăç кĕтесĕ таран (763 т., N55°34'52", E46°16'8");

çурçĕрелле Етĕрне лесничествин Атнарти участок лесничествин 77-мĕш, 71-мĕш, 66-мĕш вăрман кварталĕсен хĕвел тухăç чиккисемпе ял хуçалăх çĕрĕсемпе, сад ĕрчетекенсен "Солнечный" юлташлăхĕн территорийĕн хĕвел анăç чиккипе, Саланчăк поселокĕн хĕвел анăç чиккипе 3374 м кайса Чăваш Республикин Хĕрлĕ Чутай муниципаллă округĕн Черемушки поселокĕн çурçĕр-хĕвел тухăç кĕтесĕ таран (Вăрман урамĕн пуçламăшĕ) (818 т., N55°36'18", E46°16'9");

çурçĕр-хĕвел тухăçнелле "Сăр" автомобиль çулĕ урлă каçса, Етĕрне лесничествин Атнарти участок лесничествин 61-мĕш, 56-мĕш, 50-мĕш вăр-

ман кварталĕсен кăнтăр чиккисемпе чикĕленекен ял хуçалăх çĕрĕсемпе 3873 м кайса Çĕмĕрле лесничествин Саланчăкри участок лесничествин 12-мĕш вăрман кварталĕн кăнтăр-хĕвел анăç кĕтесĕ таран (873 т., N55°37'35", E46°18'22");

çурçĕрелле Çĕмĕрле лесничествин Саланчăкри участок лесничествин 12-мĕш, 10-мĕш, 8-мĕш, 5-мĕш, 1-мĕш вăрман кварталĕсен, вĕсем Етĕрне лесничествин Атнарти участок лесничествин 50-мĕш, 44-мĕш, 39-мĕш, 34-мĕш, 31-мĕш вăрман кварталĕсен хĕвел тухăç чиккисемпе чикĕленеççĕ, хĕвел анăç чиккисемпе 5411 м кайса Чăваш Республикин Çĕмĕрле муниципаллă округĕн чикĕ çулĕн пуçламăш 1-мĕш точки (N55°40'29", E46°18'45") патне çитет.".

2 статья

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ О. Николаев

Шупашкар хули
2024 çулхи юпа уйăхĕн 25-мĕшĕ
65 №